лĕшпе чăваш халăхĕ тунă пархатарлă ĕçсем çинчен каланă, чăваш çынни ку енĕпе революцие, совет влаçне пулăшса ĕмĕр манмалла мар хăйĕн историлле хастарлăхне, ырă кăмăлне кăтартнине палăртнă. Хăш-пĕр чăваш вулăçĕсем патшалăха апат-çимĕç пĕр-пĕр кĕпĕрне пĕтĕмĕшпе пухнинчен ытларах хатĕрлесе панă, тенĕ. Вăрмара, Шăхрана, Шупашкара, Сĕнтĕрвăррине тата Кавала уйрăмах ырăпа асăннă.

«Народный комиссариат по просвещению 1917—октябрь—1920 (краткий отчет)» кĕнеке питĕ интереслă. Ăна В. И. Ленин çав тери тимлĕ вуланă. Çакна кĕнекере Ленин паллă тунисем лайăх кăтартса параççĕ. Владимир Ильич ку кĕнекене пĕр хут çеç мар ларса вулани тата акă мĕнрен аван курăнать. Çакăн пек кĕнеке Н. К. Крупскаян та пур, вăл та унта чылай вырăна палăрта-палăрта хăварнă. Эппин çак кĕнеке В. И. Ленинпа Н. К. Крупскаяна питĕ кирлĕ пулнă.

Ку кĕнекене А. В. Луначарский тăрăшнипе пичетлесе кăларнă. Ăна тимлĕ пăхса тухса тӳрлетекенни, редакцилекенни, умсăмахне çыраканни те Анатолий Васильевич хăех пулнă. Кĕнекере çутĕç ĕçĕнчи пĕрремĕш çитĕнӳсем çинчен каланă, патша тытăмĕнчен юлнă йывăрлăхсене те палăртнă. Тĕслĕхрен, акă, пĕр сăнав питĕ нумай пĕлтерĕшлĕ: «Патша политикине пула вак халăхсен интеллигенцийĕн ăс-тăнне вырăс çыннисенчен нумайăшĕ вĕсем çине темскерле намăс йăхран тухнă пек пăхни питĕ çирĕп кĕрсе вырнаçнă, тарăн йĕр хăварнă. Çавăнпа та паян кунччĕнех вак халăхсен интеллигенцийĕ хушшинче хăйсен национальноçне пытаракансем пур». В. И. Ленина кун йышши тĕслĕхсемпе хăйне те тĕл пулма тивнĕ, çамрăк чух тата çакăн евĕр çынсем çинчен ашшĕнчен те, Иван Яковлевичран та пĕр хут çеç мар илтнĕ.

Асăннă кĕнекере чăваш халăхĕн çитĕнĕвĕсене уйрăммăн палăртнă: пĕр институт пур (ку института уçма В. И. Ленин хăй пулăшнă), вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне упраса хăварма май панă, каярахпа çак шкултан институт туса хунă, кунсăр пуçне виçĕ çул вĕренмелли 6 педагогика курсĕ уçнă; пĕтĕм Хусан кĕпĕрнинче те профтехникумсем чăвашсен çеç пулнă; клубсемпе халăх çурчĕсен шучĕпе те чăвашсем малта тăнă; иккĕмĕш сыпăклă шкулсем те ытти чылай халăхсенниничен ытларах пулнă (1920 çулхи 1-мĕш январь тĕлне). Кĕнекере тӳрех çапла каланă: халăха вĕрентес ĕç аталанăвĕ чăваш çыннисем валли уçнă пĕр сыпăклă шкулсен шутĕнче **УЙРĂММĂНАХ ВИТĔМЛĔ** (весьма рельефно) палăрать.

В. Назарьев статьине пуçтарса уйрăм кĕнеке евĕр туса упранă Ульяновсем. Çакă вара вăл документ çемьешĕн питĕ хаклă пулнине ăнланма май парать. Ку статья «Вестник Европы» журналта «Современная глушь» ятпа 1876-мĕш çулта пичетленсе тухнă. Хуплашки çине статьяна çыракан алă пусни пур: «Питĕ хисеплĕ И. Н. Ульянова — Чĕмпĕр уезĕнче ял шкулĕсем тунă чух пĕрле ĕçленине, тăрăшнине, пăшăрханнине тата савăннине асăнмалăх».

Статьяри 295 страницăна пĕтĕмĕшпех Илья Николаевича халаласа çырнă. Юлашкинчен акă мĕнле хак панă И. Н. Ульянова: «Вăл нихăçан та мăкăртатман, тарăхса усалланса кайман, хуйха ӳксе пуçне çухатман; кун пек чăтăмлăх виçесĕр ĕçе парăннипе, хăйĕн çинчен манса кайсах ĕçшĕн тăрăшнипе çеç пулма пултарнă».

Тепĕр страницăра çĕнĕ абзацран Илья Николаевичăн чи çывăх тусне — И. Я. Яковлева мухтаса çырма пуçланă. И. Я. Яковлев Чĕмпĕре И. Н. Ульяновран кăшт маларах килнине палăртнă. «Çак тивĕçлипе хакламан, сахалăшĕ çеç пĕлекен ĕçчен, чăваш йăхĕнчен тухнăскер, ĕненмелле мар йывăрлăхсене çĕнтерсе тĕттĕм чăваш ялĕнчен çут тĕнчене тухма пултарнă,— тенĕ статьяра.— Вăл хăйĕн вĕрентĕвне халăх шкулĕнчен пуçласа университетпа пĕтернĕ. Анчах та вăл малтан мала кайса пынă чух, тимĕр çеç чăтма пултаракан тертасапа çĕнтерсе пырса, тăван халăхне çутта кăларса ырă тăвас шухăш-ĕмĕтне пĕр самантлăха та манман. Ăнланмалла мар майсемпе, гимназист чухнех вăл таçти чăтлăхран темиçе чăваш ачине чĕнсе илме ĕлкĕрнĕ те пирĕн хулара пĕрремĕш чăваш шкулне уçма пултарнă».

...Владимир Ильичăн ал айĕнчи кĕнекисем вăл Раççейри мĕнпур халăха пролетариат ялавĕ тавра пĕтĕçтересшĕн ырми-канми ĕçленине, кĕрешнине татах витĕмлĕ кăтартса параççĕ.



# Хаклă хăна

Хветĕр УЯР

КАЛАВ

I

Те хăйсен кăмăлĕсем уçăран, вĕсем патĕнчен хăнасем татăла пĕлмеççĕ вара. Кирек хăçан та хăна вĕсен. Мария Ивановна кухньăра тăрмашать: апат-çимĕç пĕçерет, чашăк-тирĕк çăвать, Иван Петровичĕ магазинсем тăрăх чупать... Тепĕр чухне хăнисем хуçаланса тĕпелте урисене явса лараççĕ, хуçисем, хăнасем пек, шăпăр шăтăкĕнче е кухньăра хĕсĕнкелесе тăраççĕ.

Тĕрлĕренех пулать.

Тата пĕр кун, ик кун пурăннипе те çырлахмаççĕ, виç-тăватшар каç выртса каяççĕ. Хуçасем савăнаççĕ. Тархасшăн.

Хальхинче вĕсем малтан çыру илчĕç. Халиччен курман-илтмен этем çапла çырать:

«Эпĕ сирĕн хурăнташăр, даже тăванăр теме те юрать, мĕншĕн тесен эсир Петровсем, эпĕ те Петров пулнă. Сирĕн пекех, эпĕ Вăтакасра çуралса ӳснĕ, унтан хулая кайнă, мĕншĕн тесен вĕреннĕ çынсене ялта скучнă, т. е. кичем.

Сирĕн пата Эп Автомашинă туянма пыратăп. Жалательно конешнă паллах «Волга», т. е. Атăл.

Цалую, т. е. чуптăватăп.

Жа. Петро».

Иван Петрович хулари пĕр институтра ĕçлет. Вăл — инженер-лаборант. Арăмĕ машинистка. Ачисем вĕсен ӳссе çитсе саланса пĕтнĕ. Кулленхи хăнисене шутламасан, стариксем халĕ икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте иккĕшех шăкăлтатса пурăнаççĕ.

Çыру илсен, вĕсем тахçанччен аса илме хăтланса ларчĕç — аса илеймерĕç. Такам вăл, килес хăна — те Мария Ивановна енчен, те Иван Петрович енчен. Хушамачĕ те ниме пĕлтермест: Вăтакасра çур ял Петровсем. Хăйсем вĕсем хĕрĕх çула яхăнах ĕнтĕ хулара пурăнаççĕ. Вăл хушăра ялта такам та çуралса çитĕнме ĕлкĕрнĕ пуль. Пĕр альбом фотоӳкерчĕк пăхса тухрĕç, унта та хăнана тупаймарĕç. Палламан çынсем темиçе те пур, анчах те Петровсем вĕсем, те Сидоровсем...

— Ну, юрĕ,— терĕ юлашкинчен Мария Ивановна, аллăран иртнĕ типшĕм хĕрарăм.— Килсен, калаçура паллă пулĕ-ха.

— Ăна эс мана шан,— терĕ Иван Петрович. Хăйне вăл питĕ пултаруллă çын тесе шутлать. Анчах шел, ăна урăх никам та ун пек темест. Хăйĕн ĕçĕсĕр тата кĕнекесемсĕр пуçне вăл пурнăçра урăх нимĕн тĕлне те пĕлмест. Пĕлме хăтлансан та, пăтрататать кăна.

— Хăйĕнчен ан ыйт тата эсĕ,— асăрхаттарчĕ Мария Ивановна.— Çын, хисеплесе, пирĕн пата хăнана килет иккен те, эпир — кам пулатăн-ха эсĕ? — тесе ыйтса ларăпăр-и? Çук, апла юрамасть. Эпир унсăрах пĕлме тивĕç ăна.

— Тивĕç те, пĕлейместпĕр-çке-ха?

— Уншăн вăл мар, эпир айăплă. Тепĕр тесен, тен, хăйне курсанах палласа илĕпĕр?

— Чăнах ара.

Вĕсем çапла калаçса татăлчĕç.

Иван Петровича çыру тонĕ çеç кăшт тĕлĕнтерчĕ. Мĕнле вăл палламан çыннах «чуптăватăп»-сем çырма пулать?

Тепĕр кун телеграмма килчĕ. «Ыран вунçичĕ сехете аэропорта кĕтме тухăр,— тенĕ. Вĕçĕнче каллех ĕнерхи пек: — Чуптăватăп Петро».

— О, самолетпа килет! Знай наших! — хăранине пытарма хăтланса, мухтанчĕ Иван Петрович.

— Те сирĕн-ха вăл, те пирĕн,— терĕ Мария Ивановна.

— Кирек камăн пулсан та, Петро вăл, çавă паха. Хурăнташ. Е тăванах-и. Усал çыннăн укçи нумай, ырă çыннăн тăван нумай тет.

— Атя, мухтан ĕнтĕ.

...Аэропорта Иван Петрович çур сехет маларах пырса çитрĕ. Каякансем, килекенсем, ăсатакансемпе кĕтсе илекенсем — вĕçĕ-хĕррисĕр халăх хĕвĕшет, палламаннине шыраса тупма мар, паллаканнине те виçĕ минутранах çухатма пулать. Мĕн тумалла?

Иван Петрович аса илех кайрĕ: ара, радио пур-çке.

Çынсем самолетран тухнă-тухман аэропортри радио вара çапла пĕлтерчĕ:

— Халь кăна пирĕн хулана килсе çитнĕ Петров юлташ, сире дежурный пӳлĕмĕнче кĕтеççĕ...

Иван Петрович умне шĕвĕр сăмсаллă вĕшле этем пырса тăчĕ. Вăл пĕр вăтăр-вăтăр пиллĕксенче пулас, симĕс куçлă, йăпшак питлĕ. Хаклă йышши пальтовĕ кĕп-кĕске. Шăлавар пĕççийĕсем эрешмен ури пек. Шлепки — министрсем те пуртех ун пеккине тупса тăхăнаймаççĕ пуль: велюр. Хăйĕнчен таçтанах тройной одеколон шăрши кĕрет.

Анчах сăнĕ ун, утти! Курасчĕ сирĕн. Иван Петрович вăл мĕнле утса пынине асăрхарĕ. Чаплăн çеç те мар-ха, темле мăнаçлăн, танлăн, нумай пĕлтерĕшлĕ. Дипломатсем мĕнле утнине курман та Иван Петрович, ун шухăшĕпе, çавсем çапла утмалла пек. Е тата статуя утас пулсан, çавăн пек утса кайĕччĕ. Васкамасăр, хăйĕн хакне туйса — лап, лап, лап...

Сăнĕ вара — унпа танлаштарсан, Наполеон та ача кăна. Куна ним калаçмасăрах Александр Македонскипе юнашар тăратма пулать. (Иван Петровичсемпе юнашар çавăн пек этем пурăнать.) Хăна çине пăхсан, вăл куç умĕнчех ӳсме, ӳсме, ӳсме тытăнать. Хăв вара пĕчĕккĕленсе, пĕчĕккĕленсе пыратăн...

— Эсĕ... Иван... Петрович... мар... пуль? — ыйтрĕ вăл васкамасăр. (Кĕтнĕ пекех, вăтă инженера вăл тӳрех хăй вырăнне лартрĕ: эсĕ, терĕ.)

— Пулмасăр. Виçĕ тĕрлĕ: электробритва, ахаль бритва, безопаска.

— Эсĕ хăшне юратарах паран?

— Хăшĕ ал айне лекет — çавна.

— Пĕрне мана пар эппин эс. Хамăнне хума манса кайнă.

— Ил ара...

— Электробритвине-и?

— Хăть çавна ил.

— Пуçĕпех-и?

— Пуçĕпех пултăр ара.

Хырăнса тухсан, хăна хваттерти япаласене тиркесе сӳреме тытăнчĕ. Ун шухăшĕпе, телевизорпа телефон та хăйсен вырăнĕнче мар, сĕтелне те лартма пĕлмен... Кĕнеке шăрши те кĕрет-мĕн.

— Пулĕ, пулĕ. Ват çынсем мĕн пĕлеççĕ вĕсем, — хăна ыран е тепĕр кун килне каясса шанса, унпа килĕшсе çӳрерĕ Иван Петрович.

II

Çĕрле.

Хăна чĕлĕм туртса тултарнипе ватă инженер аран сывласа выртать. Унăн пуçĕ ыратать, чĕри вăхăт-вăхăт чарăнса ларнă пек пулать. Пĕрер çăвар шыв сыпаясчĕ те вĕт — тăма çук. Тăма мар, хускаласси пирки шухăшланипех раскладушка кăчăртатса-лăчăртатса илет те, ун сассипе вăраннă хăна юнашар кравать çинче чалт сиксе ӳкет.

— О, мĕнле сывăрас, турăçăм! Каллех вăратрĕç!

Тахçанах калана: çынна усал сунса, шăтăк ан алт, хăв кĕрсе ӳкĕн, тенĕ. Хăна валли янтăласа хунă раскладушка та шăп кăна хваттер хуçине хăйне лекрĕ. Çывăрма хатĕрленсен, çамрăк Жак Петро ун патне пырса пăхрĕ те аллине çеç сулчĕ.

— Выртмастăп эп ун çине. Луччĕ урайне сарса пар..

— Ма выртмастăн? — хăраса ыйтрĕ Иван Петрович.

— Юрамасть, — терĕ Петров. — Айăк çывăрса каять.

— Эппин эс ман вырăн çине вырт.

Çапла Иван Петрович раскладушка çине çакланчĕ. Паçăрах ун çăвар ăшĕ типсе ларнă, пуçĕ кунтă пек. Айне тата те йĕп лекнĕ, те мурĕ, аяк пĕрчине темскер тирсе тăрать, анчах пур пĕрех тӳсет вăл, хускалмасть. Юрамасть мĕншĕн тесен. Вил те чăт. Хăна кантăр.

Юнашар пӳлĕмре те çывăраймаççĕ пулас, Мария Ивановна хăюсăррăн ӳсĕркелени илтĕнет.

Иван Петрович пине çитиччен шутлама тытăнать. Ыран каç вăл, паллах, эмел те, пĕр курка шыв та пуç вĕçнех хатĕрлесе хурать. Аллуна тăс та ил. Вырăнне те силлесе кĕрет... Пилĕк çĕр вуннă патнелле çитнĕ çĕре ун ыйхи лăпсăр килет. Çывăрса, çывăрса каяс чухне хăна сасартăк харлатса илет. Чипер ут пек харт! тăвать. Иван Петрович шартах сикет. Ыйхи янк уçăлать. И-и, тапранса каять вара! Трактор çырмана кĕрсе ларнă тейĕн. Хар-харт! Хар-харт! Хуть те пӳртрен тухса тар.

Шăнса пăсăлнă пуль, мĕскĕн. Е чĕлĕм нумай туртнипе-и.

Хăнăхсан, тамăкра та пурăнма пулать теççĕ. Пĕрер сехетрен Иван Петрович хăнăхма кăна тытăннăччĕ, Петро шăп пулчĕ те тăрса пирус чĕртсе ячĕ. Ку çитменччĕ тата. Тĕтĕмĕ çăра, йӳçĕ, çăвара, сăмсана, куçа, хăлхана кĕрет, ахăр, пирус мар, махоркăран авăрнă сигарет мар-и вăл.

Чĕлĕмне туртса пĕтерсен, хăна сывлама чарăнса тăнн итлесе выртрĕ. Вара тăчĕ те сĕтел патнелле утса кайрĕ, пĕчĕк лампăна чалт çутрĕ. Чăматан уçни, хут чăштăртаттарни илтĕнчĕ. Темскер чăшт, чăшт, чăшт тăвать те лăшт туса ӳкет. Унтан каллех чăшт, чăшт тăвать те лăшт...

Хăна укçа шутлать-мĕн. Йĕри-тавра хăй чакак пек хăраса пăхкалать, итле-итле ларать...

Иван Петровичăн паçăрах айăкĕ пĕлми пулнăччĕ, касса илсен те туяс çук. Халĕ ак пырĕ тӳсме çук кăтăклана пуçларĕ. Тăвăнса выртрĕ-выртрĕ те вăл чăххăм! ӳсĕрчĕ.

Хăна укçи çине лап йăванчĕ... Иван Петрович тахçанччен çывăрнă пек туса выртсан тин вăл çĕкленсе укçине шутласа пĕтерчĕ, ăна чăматана пуçтарса чиксе, чăматанне сĕтел айне лартрĕ. Унтан хăй кравачĕ айне куçарчĕ. Юлашкинчен минтерĕ айне илсе хучĕ.

«Шанмасть, — теçе шухăшларĕ кил хуçи. — Те ашшĕ-амăшĕ çавăн пек çынсем ĕнтĕ. Шел йĕкĕте. Аслă хăй, сăнĕ-пуçĕ те пур...»

Кансĕр выртнипе хăна тата хытăрах харăлтата пуçларĕ. Такама пăвса вĕлереççĕ тейĕн çав.

Çывăрасси пулмарĕ кĕçĕр. Тул та çутăлса пырать ав. Иван Петрович хуллен тăчĕ те чĕрне вĕççĕн тепĕр пӳлĕме тухрĕ. Мария Ивановна та тăнă-мĕн, тĕттĕмре чӳрече патĕнче ларать.

— Эсĕ ма çывăрмастăн, Маша?

— Ш-ш! Хуллентерех эсĕ. Ыйхă тăранчĕ ара.

— Çутас-и?

— Çынна вăратăн. Кухне атя.

Кухньăра вĕсем пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Иван Петровичăн пичĕ лӳчĕркенчĕк, курпунĕ те тата ытларах тухнă пек. Мария Ивановна ывăннă сăнлă.

— Ман вырăн çине кайса вырт, Ваня.

— Хăв вырт.

— Эсĕ, мĕн, çиленнĕ пек?

— Хăни ку ытла канăçсăр этем пулчĕ-ха. Çĕрĕпе утса çӳрет.

— Кирек мĕн хăтлансан та, хăна вăл пирĕн. Чăтас пулать, ĕмĕрлĕхе килмен вăл. Килте хăна пур чухне хуçи — хăна, хăни — хуça, тенĕ.

— Вăл çапли çапла та-ха... Палларăн-и эс ăна, кам тавраше вăл?

— Сехмет Мулентей ачи. Вĕсен çăм таптаракан машина пурччĕ.

— Леш çурçĕр енне ăсатнисен-и? Хурăнташ-и вĕсем пирĕн?

— Анне енчен таçтан тиветчĕ пулмалла.

III

Ĕçре Иван Петрович кунĕпех сĕнксе ларчĕ. Кăшт шухăша каять кăна, пуçĕ кăкăр çине лăнк усăнса анать. Аран-аран тăвата сехете кĕтсе илчĕ.

«Ну, ыйха туртатăп ĕнтĕ», — тесе ĕмĕтленсе пырса кĕчĕ вăл килне. Пăхать — пĕтĕм пӳртне тустарса пĕтернĕ. Гардероба балкон алăкĕпе шалти пӳлĕм алăкĕ хушшине хĕстерсе лартнă. Уралла пысăк куçкĕски хыçалти стена çумĕнче. Мария Ивановна вырăнне тĕттĕм пӳлĕме куçарнă. Телевизор гардероб тăрринче, киномĕн пăхас пулсан, пуçа маччаналла каçăртмалла. Сĕтел урай варринче. Çамрăк Петровĕ хăй пукан çинче çуллă икерчĕ пек çуталса кулкаласа ларать.

«Ну, ĕç тупса пана ку», — хăраса шухăшларĕ Иван Петрович. Ыйхи ун янках уçăлса кайрĕ.

— Эс паян кунĕпе те лăш кураймарăн пуль? — ыйтрĕ вăл.

— Ĕçлерĕм кăштах, — терĕ хăна сăпайлăн. — Ну, мĕнле, килĕшет-и кун пек? Пӳртри япаласене те пĕлсе вырнаçтарас пулать çав. Сирĕн ытла та ĕлĕкхиллеччĕ.

Иван Петрович хăйĕн кабинетне кĕрсе пăхрĕ те, çӳçĕ ун чăшăл хускалчĕ. Хăна кунта та хуçаланма ĕлкĕрнĕ-мĕн. Тăтăш тыткаланипе кивелнĕ чи кирлĕ кĕнекесене сĕтел çывăхĕнчен таçта аякка илсе кайса пытарса хунă. Вĕсен вырăнĕнче «Книга о вкусной и здоровой пище» евĕрлисем куçа çисе тăраççĕ. Пысăкăшне, хуппашкине, тĕсне кура суйласа лартса тухнипе пĕр автор кĕнекисемех халь ĕнтĕ пĕтĕм библиотекипе сапаланнă. Мĕн те пулин шыраса тупас тесен, сехечĕ-сехечĕпе чаçаланмалла. Унччен пек йĕркелеме сахалтан та пĕр эрне кирлĕ. Вăл отпуск илмесĕр те пулмасть пуль ĕнтĕ. Мĕн чул вăхăт сая каять. Шел.

Иван Петрович хăнана ятласа тăкма хатĕрччĕ, Мария Ивановна асăрхаттарнине аса илчĕ те çапла çеç каларĕ:

— Ма ун пекех асаплантăн, ачам, ачам. Хамах мĕнччĕ... Хăнана ĕçлеттерсен, аван мар ун пек. Санăн пĕреххут хула курса çӳремеллеччĕ.

— Ĕлкĕрĕп-ха. Кунта эпĕ пĕр кун — ик кун çеç пурăнас çук вĕт.

«Аха, ун пек иккен...» — терĕ те Иван Петрович нимĕнле комментари те тумарĕ.

Тепĕр каç та çывăраймарĕç вĕсем. Хăна пĕрре укçине тĕрĕслеме, виçĕ хут чĕлĕм туртма, тепре шыв ĕçме тăчĕ. Кашнинчех лампăна çутса ярать вăл, хыттăн ӳсĕркелесе утса çӳрет...

Виççĕмĕш кунне Иван Петровичпа Мария Ивановна тӳсеймерĕç — хăйсен шучĕпе отпуск илчĕç. Хăни хулана тухса кайнă-кайман вĕсем çапса антарнă пек çывăрса каяççĕ. Ура сасси илтĕнсен, саптаксем пек сике-сике тăраççĕ.

Çамрăк Петро питĕ перекетлĕ çын-мĕн: хулара апатланса укçине пĕтермест, кирек ăçта пулсан та, пĕр минут кая юлмасăр киле хашкаса чупса çитет. Апат вăхăтра пиçсе ĕлкĕрмесен, хăй кăмăлсăр пулнине систерет. Пирусне те вăл Иван Петровичсен укçипе туянать. Тĕрĕс те тăвать пуль ара: хăна вĕт... Вăл çамрăк çын, ăна укçа кирлĕрех.

Кĕçех ун патне темĕнле çивчĕ куçлă йăпăлкка этемсем çӳре пуçларĕç. Пурте çав тери хăюлă, таçтан никам илме пултарайман дефицитлă таварсене «пусса выртса» е «тăгăлтарса» илнисемпе мухтанаççĕ. Хăйсене пĕртте ытлашши вăйлă темелле мар. Шӳреке, имшер. Çамрăк Петро та вĕсен умĕнче мăнаçлăрах курăнать. Кусем ун тавра спутниксем çĕр тавра çаврăннă пек вĕтĕртетеççĕ, «Петро юлташ» та «Петро юлташ» теççĕ, машина тупса пама пулаççĕ.

Эрех ĕçеççĕ вĕсем, пирус та сигарет мăкăрлантараççĕ. Ĕçме-çиме пĕтсен, Иван Петрович çинчен аса илеççĕ.

— Эй, старик, ăçта эсĕ? Эрех илсе кил!

Çамрăк Петрона вĕсем кил хуçи, паллă ученăй, Иван Петровича унăн мĕскĕн хурăнташĕ, теççĕ пулас. Вăл шухăша хăна хăй те сирсе яма васкамасть. Юлташĕсем ытла атса кайсан çеç вăл «старик» хутне кĕнĕ пек тăвать:

— Ну, эсир, çамрăксем, хăвăрах кайăр ĕнтĕ. Ват çынна... ырă мар ун пек. Юрамасть.

Вара Иван Петровича аяккалла чĕнсе илет те пӳрнисене вылятса кăтартать: укçа парса яр, тет ĕнтĕ.

— Кайран тӳлеççĕ вĕсем сана, ан хăра.

Анчах ни кайран, ни малтан укçа пани-туни пулмасть. Çамрăксен çĕр тĕрлĕ шухăш та, манаççĕ пулас вĕсем. Кил хуçисем курортра канма пуçтарса хунă укçа шăнкăрт çеç çавăнта кĕрсе каять вара.

Çапла пĕр эрне иртет. Хваттере кастарман ват качака таки шăрши çапса лартрĕ, форточкăсене виçĕ çул уçса тăратсан та, тухса пĕтессĕн туйăнмасть. Мария Ивановнăн кашни кунах пуçĕ ыратса çӳрет. Иван Петрович та йăшнă сăнлă. Анчах вĕсем паттăррăн чăтаççĕха, хăйсем тарăхнине палăртмаççĕ. Мĕн тăвас тен эс — хăна — хуçа, хуçисем хăна-çке-ха.

Çамрăк Петро килнĕренпе ик эрне çитрĕ. Эрех ĕçесшĕн кастарса çӳрекенсен йышĕ икĕ хут ӳсрĕ, машинин тĕсĕ те курăнмасть-ха.

Карчăкпа старик чăтрĕç-чăтрĕç те пĕрре, хăни çук чухне, вăрмана тухса тарчĕç. Хăнин япалисене кӳрше куçарса хучĕç, алăк çине тул енчен çавăн пек çырнă хут çыпăçтарса хăварчĕç:

«Хисеплĕ Петро юлташ!

Сирĕнпе сывпуллашмасăр тухса кайма тӳр килнĕшĕн тем пекех шел. Пире искĕмĕре те васкавлă ĕçпе кăларса ячĕç. Пĕрер уйăхсăр та таврăнаймастпăр пуль. Ан çилен. Килтисене салам кала.

И. П-па М. И.»

Тинех ирĕке юлтăмăр тесе, стариксем вăрманта кунĕпе савăнса çӳрерĕç. Пĕр кун хушшинчех вĕсене сăн кĕчĕ. Киле çĕрле тин таврăнчĕç. Пӳрт умĕнче Иван Петрович пуçне çӳлелле каçăртса пăхрĕ те тротуар çине лак ларчĕ. Вĕсен виçĕ чӳречи те çап-çутă, прожектор пек ялкăшса ларать.

Шалтăрах вăйран кайнă упăшкине Мария Ивановна аран пӳрте çавăтса кĕчĕ. Хăна слесаре чĕнтерсе çăраççи юраттарнă-мĕн, сĕтел хушшинче пĕчченех эрех ĕçсе, апат явтарса ларать. Хăйне тыткалама укçа вăл Иван Петровичсен ячĕпе кӳршĕрен кивçен илнĕ пулнă.

Аптраса ӳкмен йĕкĕт.

Тепĕр виçĕ кунран вăл машина туянчĕ-туянчех. Маршрут хучĕ çыртарма тата икĕ кун кирлĕ пулчĕ. Вара ăсатса ячĕç ăна. Çул çинче тыткалама тесе, хаклă хăна Иван Петровичсенне пĕр витрине, фарфор турилккине, куркапа икĕ кĕмĕл кашăкне хурса кайрĕ. Алса тулне илчĕ. Хăйĕн хураласран Иван Петровичăн кивĕ костюмне тăхăнчĕ. Плащне хучĕ. Атту çул çинче тем пулас-килес. Паян кирлĕ мар — ыран кирлĕ пулма пултарать. Сых ятне.

Каялла таврăнса, тата мĕн те пулин ыйтасса кĕтнĕччĕ те — таврăнмарĕ вăл.

Карчăкпа старик пĕр кун та пĕр çĕр вăранмасăр çывăрчĕç. Унтан тата тепĕр çĕр. Кăштах вăй кĕрсен, канма Ильинкăна тухса кайрĕç. Алăкĕ çине çапла çырса хăварчĕç: «Хăнана е ĕçпе килнĕ ырă çынсем! Çăраççи кӳршĕре». Мĕншĕн тесен, кашни пин çынран тăхăр çĕр тăхăрвун тăххăрĕшĕ — лайăх çынсем, пĕри çеç — Жак Петро.

Ыр кăмăллă стариксене шеллесе, çурт коменданчĕ алăк çинчи хута çурса пăрахрĕ.